Инв. № 2216
38-28

ИВАН ИВНИК

# ÇĔНĔ САВĂСЕМ

ЧӐВАШ
ГОСИЗДАТ
1 9 3 8

ИВАН ИВНИК

# НОВЫЕ СТИХИ

★

ЧУВАШСКОЕ
ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
ЧЕБОКСАРЫ 1938

ИВАН ИВНИК

# ÇĔНĔ CĂВĂСЕМ

★

ЧĂВАШСЕН
ГОСУДАРСТВĂ ИЗДАТĔЛСТВИ
1938 ШУПАШКАР

*Редактор Н. К. ЯНГАС*

*Техредактор Ф. КОШКИН*

Послано
в производство
29-I-38 г. Подписано
к печати 13—II-38 г. Уполно-
моченный Чувашлита № 1391.
Чувашгиз № 33.
Заказ № 079. Тираж
2000 экземпляров.
Фор. бум. 62x92-32.
Об'ем 1,75 п. л.

*Тип. № 1 Чувашполиграфтреста*

*г. Чебоксары.*

## ОКТĂБӖР ЙУРРИ

Пултарулă, чаплă епĕр,
Епĕр—аслă вăй-хăват.
Вутлă-çулăмлă Октăбĕр
Чĕртрĕ пирĕн çĕршыва.

Йалкăш, йалкăш, çут Октăбĕр,
Çулăм çавăр тĕнчене.
Есĕ—пирĕн пурнăç чапĕ,
Есĕ—пирĕн çуркунне.

Çитĕнет Совет вăй-халĕ,
Чап сарăт вăл таврана.
Аслă çĕршыври пур халăх
Пĕр çемйе пек пурăнать.

Йалкăш, йалкăш, çут Октябĕр,
Çулăм çавăр тĕнчене.
Есĕ—пирĕн пурнăç чапĕ,
Есĕ—пирĕн çуркунне.

Хуласем ӳсеççĕ аслăн,
Çĕнĕ ӳсĕм уйхирте.
Йешĕрет сӳнми хаваслăх
Пирĕн çĕнĕ ĕмĕрте.

Йалкăш, йалкăш, çут Октябĕр,
Çулăм çавăр тĕнчене.
Есĕ—пирĕн пурнăç чапĕ,
Есĕ—пирĕн çуркунне.

Пуранмашкăн питĕ лайăх,
Ĕçлемешкĕн пит паха.
Çут Октябĕр пире панă
Çакă тивĕç-ырлăха.

Йалкăш, йалкăш, çут Октябер,
Çулăм çавăр тĕнчене,
Есĕ—пирĕн пурнăç чапĕ,
Есĕ—пирĕн çуркунне.

Ленин—Сталин вăл—Октябĕр,
Ленин—Сталин—çуркунне.
Вĕсене мухтатпăр епĕр
Пĕтĕм халăх йурринче.

Йалкăш, йалкăш, çут Октябĕр,
Çулăм çавăр тĕнчене.
Есĕ—çĕнĕ пурнăç чапĕ,
Есĕ—аслă çуркунне!

1937.

## ХĔВЕЛĔМĔР СТАЛИН

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Йурлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр йурă,
Йурă кайтăр йан та йан!

Кам хĕн-хурлă пулнă ĕлĕк,
Камшăн пулнă хĕн-асап,—
Халь вĕсенĕн çут хĕвелĕ
Тухрĕ ăшшăн,
Ăшшăн тухрĕ çутатса.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Аслă тусăмăр, çулпуç,
Телейе куратпăр халĕ

Ĕнтĕ епĕр,
Епĕр ĕнтĕ кущран-кущ.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Ес çутатăн ĕмĕрех.
Савăнаťçке пĕтĕм халăх,
Патăн ырлăх,
Ырлăх патăн ес пире.

Тавтапуç, йуратнă Сталин,
Тавтапуç сана, мухтав!
Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Есĕ—йурă,
Йурă—есĕ, ес—йалав.

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх,
Йурлама та пит аван.
Советсен çĕршывĕ тăрăх
Кайтăр йурă,
Йурă кайтăр йан та йан!

1937.

## ĂШĂ САЛАМ

Улма-чăпар ут еп утланам-и,
Инçе кăна çула еп тухам-и.
Ех, пырса кĕрем-и еп Мускава
Улма-чăпар утăма выљатса!

Ех, пырса кĕрем-и еп Мускава
Улма-чăпар утăма выљатса!

Мускав урамĕсем—пин урамĕ,
Улма-чăпар утпа еп пырам-и.
Сӳнми ĕмĕт пекехçке йалтăрса
Кремĕл çинче çунаççĕ çăлтăрсем!

Улма-чăпар утпа еп пырам-и,
Хамăр çăлтăрсене еп курам-и.

Хĕрлĕ плошчăт çинче, ай, мавзолей,
Пырайса тухам-и еп вăл тĕле.
Мавзолейа кĕрсе еп курам-и,
Ленин атте çине еп пăхам-и.

Мавзолейа кĕрсе еп курам-и,
Ленин атте çине еп пăхам-и.

Шухăшăмсем ман аслă Кремĕлре,
Унта пирĕн çулпуç—кăвар чĕре.
Сталин патне кĕрсе еп тухам-и,
Колхозсенчен салам еп калам-и.

Сталин патне кĕрсе еп тухам-и,
Колхозсенчен салам еп калам-и.

Улма-чăпар ут еп утланам-и,
Инçе кăна çула еп тухам-и.
Ех, килсе кĕрем-и еп колхоза
Улма-чăпар утăма выљатса!

Ех, килсе кĕрем-и еп колхоза
Сталин йанă чи ăшă салампа.

1937.

## ÇИТРĔ, ÇИТРĔ КĔТНĔ ĔМĔР

Çитрĕ, çитрĕ кĕтнĕ ĕмĕр,
Ырлăх килчĕ етеме.
Пурнăç тулăх—пурăнмашкăн,
Пурнăç лайăх—ĕçлеме.

Йешĕрсе ÿсет хаваслăх
Чи илемлĕ сатсем пек.
Чăмăртанчĕ, çирĕпленчĕ
Йумахри пек ÿсĕмпе.

Атăл тăрăх—çичĕ кукăр,
Çичĕ кукăр—çич хула.
Кашнийех вĕсем çĕклеççĕ,
Çурхи çил пек, кăмăла.

Ҫĕнĕ куншăн ҫунатлантăм,
Уншăн уҫрăм сассăма.
Пĕр сăмах „йулташ“ пур пирĕн,
Пĕр пĕччен вăл—пин сăмах.

Анлă Атăл, ҫутă Днепăр,
Урал шывĕ, йе Амур...
Еп пĕлетĕп, пур ҫĕрте те
Сталин панă ăшă пур.

1937.

## ĂМĂРТУ ЙУРРИ

Хура тинĕсĕн, Амурăн,
Пŏлђусран Памир таран
Çĕнтерӳлĕн, пултарулăн
Ăмăрту йурри йанрат̆.

Сывлăшра йанрат̆ вăл йурă,
Çĕр айне те йанратат̆.
Пăрлă тинĕс те хăйулăн
Унпалах халђ ăшăнат̆.

Донбасри шахт̆ор Стаханăв
Тĕлĕнтерчĕ тĕнчене.
Хапăл турĕ пĕтĕм халăх
Унăн паттăрла ĕçне.

Ăмăртатпăр—шахтă, савăт,
Ăмăртатпăр колхозсем.
Ăмăртулă ĕçĕн шавĕ
Кунран-кун пырaҫ ÿссе.

Ăмăртатпăр, кăтартатпăр
Çĕнĕ пурнăç хăватне.
Паттăр хыççăн çĕнĕ паттăр
Палăртатпăр кулленех.

Ăмăртатпăр, шав утатпăр
Ленин—Сталин çулĕпе.
Епĕр çирĕп, епĕр паттăр,
Епĕр вăйлă тĕнчипе!

Хура тинĕсĕн, Амурăн,
Полђусран Памир таран
Çĕнтерÿлĕн, пултарулăн
Ăмăрту йурри йанраҫ!

1937.

## ЉОТЧИКСЕН МАРШӖ

Хуллен хӗрелет пӗлӗтсен йарапийӗ,
Çунаť шурӑмпуç манӑçми илемпе.
Мухтавлӑ та аслӑ Совет çӗрӗ çийӗн
Вӗçет хурçӑ кайӑк çак селӗм ирпе.

Паттӑр, хастарлӑ
Пул, пилот!
Харсӑррӑн йарӑн,
Самољот!

Вӗçет самољот пултарулӑн, хӑйулӑн,
Маттур пилотсем вӗçтереççӗ ӑна.
Пин-пин çухрӑм урлӑ, пӑрсем-шывсем
урлӑ
Пропеллӗр сасси йанрататť таврана.

Кăмăл—хаваслă,
Çул—пĕрре.
Вĕç, хурçă кайăк,
Вирлĕрех!

Мала та мала йаранаť хурçă кайăк,
Чăрмав чарас çук паттăрсен ĕмĕтне.
Йалан çĕнтерет бољшевисăм вăй-халĕ,
Çĕнтертĕмĕр, çитрĕмĕр Пољус çине.

Епĕр кăтартнă
Вăй-хала.
Пирĕн çулсемĕр
Малалах!

Ехер те тăшман тапăнма шутласассăн
Хаваслăх хĕвелĕн çĕршывĕ çине,—
Маттур ескадриљйăсем пирĕн аркатĕç,
Тĕп тăвĕç тăшманăн хура ушкăнне!

Епĕр калатпăр
Тепĕр хут:
Харсăррăн йарăн,
Самољот!

1937.

## ПОЉУС САВВИ

Шыв-шыв урлă, ту-сăрт урлă
Пушхирĕн те тинĕсĕн
Мухтавпа, чыспа тухаççĕ
Пирĕн ĕмĕр çыннисем.

Кам-ха савăнман, ачсемĕр,
Кам çунман-ха йышпала?
Вĕлкĕшет ав Пољус а та
Пирĕн çулăмлă йалав.

Пирĕн паттăрсем мухтавлăн
Çитрĕç Çĕрĕн тӳпине.
Пољуса çитсе антарчĕ
Водопйанăв—карапне.

Çĕнтерӳ çуратнă ĕçĕн
Кунĕ-çулĕ манăçмĕ.
Çĕр тӳпи çинче, ачсемĕр,
Сухалне вĕçтерчĕ Шмидт.

Çын çитсе курман çĕр йулме,
Пур çĕре те çитĕçĕ.
Вĕçсе каçрĕç Полюс урлă
Чкалăвпа ун тусĕсем.

Парăнаттăр пăрсен пушхирĕ,
Пăхăнаттăр вăл етеме,—
Ма тесен—унта çĕкленнĕ
Большевисăм çулăмĕ!

1937.

* * *

И пӗлӗт те иртет,
Кӑвак пӗлӗт иртет.
Пӗлӗтсенчен ҫӳлте
Ман савни вӗҫет.

Шур тутӑрпа сулса,
Йулатӑп ыр сунса.
Йурласа вӗҫ, тусӑм,
Мана асӑнса!

Чӗремӗрсем ҫамрӑк,
Йунӑмӑрсем вӗри.
Елле ӗнтӗ епӗр
Салхуланпӑр-и?

Тусăм, сана савса,
Еп те çитес çула
Вĕçме вĕренетĕп
Самолђотпала.

И пĕлĕт те иртет,
Хурçă мотор кĕрлет.
Еп те вĕçĕп унчух
Тусăмпа пĕрле.

1937.

## ÇЫРУ

Вăхăт шав иртет. Каллех, савниçĕм,
Ылттăн тумлăн килĕ кĕркунне.
Вĕлтĕртетĕ çулçăлăх пĕр вĕçĕм,
Пилешсен хĕлхемĕ сирпĕнĕ...

Вăхăт шав иртет. Маттур чиперĕм,
Килсе кĕрĕн ес пĕр лăпкă ир.
Мĕнешкел хаваслăх пулĕ хĕрĕн,
Ырă тусăм, çамрăк командир!

Килсе кĕрĕн. Хапăллăпăр пурте,
Йышăнăпăр йалĕ-йышĕпе.
Кăкăру çинче сан çутă орден
Çутăлĕ чи çутă çăлтăр пек.

Халлĕхе ес çивчĕ те хăйулă
Хураллатăн аслă çĕршыва.
Пĕр тăшман та каçмĕ чикĕ урлă,
Есĕр—паттăр, есĕр—вăй-хăват.

Ырă кун сана, маттур савниçĕм,
Çывхарать, ав, ылттăн кĕркунне.
Вĕлтĕртетĕ çулçăлăх пĕр вĕçĕм,
Пилешсен хĕлхемĕ сирпĕнĕ...

1937.

## АМĂШĔ

Анат-касра, кĕтесре,
Сат-пахчийĕн варринче
Шурă пÿрт ларатĕ.
Сат-пахчинчи çав пÿртре
Ывăл-хĕрсĕр, пĕр пĕччен,
Карчăк пурăнатĕ.

Çуллен-çул çуркуннепе
Шурă-шурă чечекпе
Тумланатĕ пахча.
Çакăн пек чух, пĕр ирпе,
Карчăк хăйĕн ачипе
Уйрăлнă тахçан.

Пулнă вăхăт: ун чухне
Совет çĕрне пĕтерме

Килнĕ адмирал.
Карчăк хăйĕн ывăлне
Ăна хирĕç кĕрешме
Пилленĕ ăс-хал.

Йĕкĕт—хĕрлĕ партизан
Çапăçăвăн хирĕнче
Шеллемен йунне.
Шăп çулталăк çапăçсан,
Çеçенхирĕн варринче
Хунă вăл пуçне.

Вată карчăк кашни çул,
Чечеке ларсассăн сат,
Кĕтет ывăлне.
Анчах ывăл килес çук..
Килленеймĕ тек пăхса
Карчăк ун çине...

Анчах карчăк хурлă мар,
Вăл мăнаçлă, вăл хастар,
Вăл çапла пуплет:
Тепĕр хут килсен тăшман,
Çак кунçулшăн çапăçма
Хам та кайăп, тет.

1936.

## ПЕРЕКОП

Ушкăн-ушкăнăн, пиншерĕн
Иртрĕç хĕрлĕ çăлтăрсем.
Пулассийĕ пулĕ пирĕн,
Врангĕл, ан тăр шăл йĕрсе!

Хыçа йулчĕ Александрăвск,
Çывхарса килет Чонгар.
Донбаса кĕтсе тек ан тăр,
Сурчăк ан çăт, шурă çар!

Ушкăн-ушкăнăн, пиншерĕн
Йалкăшатпăр—çăлтăрсем.
Перекоп час пулĕ пирĕн,
Ашкăнаймĕç тăшмансем.

Пире Блюхӗр ырлӑх сунчӗ,
Ҫул уҫса пыраӑ малта.
Пирӗнпе—йуратнӑ Фрунзӗ,
Ӗмӗрсем манми йулташ.

Хӳрине хӗстерчӗ анчӑк,
Вӑркӑнтартмӑр Врангӗле.
Вӑрхурах пулкки путланчӗ,
Епӗр йултӑмӑр киле.

Ушкӑн-ушкӑнӑн, пиншерӗн
Йалкӑшаҫҫӗ ҫӑлтӑрсем.
Ассенчех-ха халь те пирӗн
Перекопӑн каҫӗсем.

1937.

## РУСТАВЕЛИЙЕ АСӐНСА

Ӗмӗр хыҫҫӑн иртрӗ ӗмӗр,
Пӗрре мар ҫӗнелчӗ йурӑ,
Ту-сӑртсем те урӑхланчӗҫ,
Тепӗр май йухаҫ шывсем,—
Есӗ ҫав-ҫавах мухтавлӑ,
Есӗ ҫав-ҫавах хӑйулӑ,
Хаљ те уҫҫӑн йанӑраҫҫӗ
Санӑн чаплӑ йуррусем.

Йурӑсти вӑл—шӑпчӑк йевӗр,
Йаланах йурлать хавасӑн,
Ҫут хӗвел йалан хӗрӳлӗ,
Ҫут уйӑх йалан чечен,—
Ес те ҫавсем йевӗр, гени,

Йаланах ес чаплă, аслă,
Ма тесессĕн, ес йурланă
Туслăх, паттăрлăх çинчен.

„Хурлăх-мĕн килсе тухсан та
Пул мăнаçлă, пул ес çирĕп,
Тăшмана нихçан ан парăн,
Чыслăн вил çапăçура...“
Кĕрешмешкĕн, çĕнтермешкĕн
Йыхăрат сан музă-лирă,
Тус пулмашкăн, йуратмашкăн
Етеме вăл йыхăрат.

Ĕмĕрсен шевлийĕ—Шота,
Çутă гени Руставели!
Пирĕн ĕмĕре ес çитрĕн
Чапла çăлтăр çутти пек.
Пирĕн ĕмĕр—çĕнĕ ĕмĕр.
Пирĕн ĕмĕр—çут хĕвеллĕ,
Пурăнатпăр епĕр халĕ
Аслă Сталин ăшшипе.

Ĕмĕрсен шевлийĕ—Шота,
Çутă гени Руставели!
Вырăс-и, чăваш-и, месх-и—

Халĕ пурте ырлăхра.
Вырăс-и, грузин-и...—пурте
Пурăнатпăр пĕр çемйелĕн,
Пĕр тăван пек мĕнпур халăх
Аслă, ирĕк çĕршывра.

1937.

## АТИЛĂ ИОЖĔФ ТУПĂКĔ ÇИНĔ

„Покончил самоубийством, бросившись под поезд, один из талантливейших венгерских поэтов Атила Иожеф. Причина самоубийства—острая материальная нужда и непрерывные преследования со стороны венгерского правительства".

Хроникă.

Йепле тискер, йепле хăруш хыпар!
Вĕсем хĕрӳлĕ сăвăçа тĕп-турĕç.
Анчах еп хаљ пуçа усасшăн мар,
Фашисăма питлет пайан ман йурă.

Питлеп сана: ес пирĕншĕн тăшман,
Ес пирĕншĕн тăшман, тискер фашисăм!
Çак сăвăсем—сана сунан ылхан,
Çак сасă вăл—ман тавăрулă сасă!

Пӗлетпӗр епӗр: вăхăт çывхарать,
Ес çӗр çинче асаймăн вăрхурахăн.
Мӗлйун ӗçхалăх çӗкленсе карах
Сана çӗр питӗнчен шăлса пăрахӗ!

1937.

## ПИРĔН СĂВĂ

Хăт̆ выртса ĕç, хăт̆ кĕрсе çăвăн—
Шăнкăртатса йухаç шывсем.
Шыв йухăмĕ—халђ пирĕн сăвă,
Шыв сулхăнĕ—халђ пирĕн сăвă,
Çакна ес, тусăмçăм, пĕлсем.

Сатсем шап-шур çеçке çурсан,
Илем килет тăван çĕршывăн.
Йем-йешĕл сат—халђ пирĕн сăвă,
Чечеклĕ сат—халђ пирĕн сăвă,
Çакна ес, тусăмçăм, туйсам.

Вăрмансене шăпчăк килсен,
Йанрат̆ хавас тăван çĕршывăм.
Шăпчăк кĕвви—халђ пирĕн сăвă,

Шăпчăк йурри—халĕ пирĕн сăвă,
Çакна ес, тусăмçăм, пĕлсем.

Курса-илтсе пуль йуратăван
Хĕлхемĕсем йалкăшнине.
Чăн йурату—халь пирĕн сăвă,
Тăванлăх—халĕ пирĕн сăвă,
Йурат, йулташ, тусусене.

Хĕвел шевли йалан çап-çутă,
Уйăх çути йалан чечен.
Хĕвел шевли—халь пирĕн сăвă,
Уйăх çути—халь пирĕн сăвă,
Ан ман, йулташăм, ун çинчен.

Кунçул—кăвар, пĕлетĕр хăвăр,
Хĕрӳ кунçул саватĭ мана.
Кунçул кĕвви—халь пирĕн сăвă,
Кунçул йурри—халь пирĕн сăвă,
Пĕлмешкĕн тивĕç ес ăна.

1937.

## ВЫРМАРА

Çанталăк селĕм. Кун уйар.
Туллин сывлаť колхоз ийулĕ.
Ăшчик туртаť: уйа, уйа!..
Чăнах та, кам халђ киле йулĕ?

Йухаťçке ылттăнăн уйхир!
Выратпăр ушкăнăн, бригадăн.
Ака-сухан хуйхи-суйхи
Çук тек пачах колхозлă йалăн.

Епир—ĕçре, ĕç—хамăрта,
Епир—вăй-хал, епир—хавaслăх!
Ав, хăлаçланнă—ăмăртаç
Ик хурçă жнейкă хурçă саслăн.

Пирте—хаваслăх, вăй—пирте!
Бригадăра кашни—ударник,
Йăрансăр анлă уйхирте
Найанлăха епир путарнă.

Ĕçчен колхозниксен сасси
Йанрать хир тăрăх килĕшӳлĕн.
Ĕç йăвăрришĕн хăрасси
Асăмăрта йулмарĕ пирĕн.

Типтер пухатпăр ыраша,
Вĕçне тухса пырать каçалăк.
Ăнса пулать вăл тăтăшах
Колхоз тырри. Çаплах кăçал ак.

Кĕлтен-кĕлтен выртать ыраш,
Вырать машинă вашаватлăн...
Кĕртет килне ылттăн тырра
Колхоз çемйийĕ тараватлăн.

1935.

## КӲРШӖ ХӖРӖ

Шурӑ шупӑр. Симӗс лентӑ.
Йӗкӗр ҫивӗт—ик йенче.
Куҫӑмсем кайа пӗлместчӗҫ
Ҫӗмӗрт куҫлӑ хӗр ҫинчен.

Еп ӑна халь кунӗн-ҫӗрӗн
Асилетӗп. Асӑмран
Вӑл тухмасть... Пӗр ҫырусем ҫеҫ
Йулчӗҫ манӑн алӑра...

Вӑрттӑн шухӑшне пӗлмешкӗн
Хӗн питех те хӗрсенне.
Тӳртӗнрех пӑхма пуҫларӗ
Кӳршӗ хӗрӗ ман ҫине.

Пурпӗр вӑл мана пӑрахмӗ,
Ҫитӗ хурлӑ ҫӳресе!
Ун патне каллех еп ҫырӑп
Ӑша-ӑшӑ ҫырусем.

1937.

* * *

Хурлăхан хуралнă пахчара,
Шуçăм тĕсĕпе çунаť чийе.
Мĕншĕн ес тухмарăн-ха вара,
Мĕншĕн кĕттеретĕн ирчченех?

Тусăм, чунçунтармĕшĕ, варли!
Саншăн еп çунатăп кулленех.
Куçусем сан—хурлăхан çырли,
Сăн-пуçу сан—хĕрлĕ чийе пек.

Таврара чийе те хурлăхан.
Ес кайа пĕлместĕн асăмран.
Пĕчченех еп кĕçĕр пахчара,—
Ырлăха-ши ку, йе хурлăха?..

1937.

* * *

Кӳле çумен, хуран айен
Утмаçул.
Уйӑх тухрӗ, мерчен сапрӗ
Темӗнчул!
Ыраш уйӗ, тулӑ уйӗ
Шӑркара.
Тухар мар-и, савнӑ тусӑм,
Васкарах.

Чӳхенет, ишет çут уйӑх
Кӳлӗре.
Лӑс вӑрманӗ ав, чӗнет пек:
— Килӗрех!
Тухар мар-и, пӑхар мар-и
Куçран-куç.

Кăмăла ес, савнă тусăмçăм,
Ан хуç.

Айакра выртаť, ав, улăх
Сарлакан.
Пулас çук тек йуратушăн
Хурлакан.
Хурăн айĕн, кўлĕ çумĕн
Утмаçул.
Каçĕ лăпкă. Тĕл пулмасăр
Чăтма çук!

1937.

## ТЕЛЕЙ ÇУЛĔ

ЙУМАХ

Ĕлĕкех мар, авал мар
(Суйеçтерме аван мар)
Аслă Атăл хĕрринче,
Сĕм вăрмансем хушшинче,
Йатсăр йалта, пĕр касра,
Тăйлăк-тайлăк кил-çуртра
Мучипеле кинемей
Пурăннă, тет, хăйне май.

Телей тени вĕсене
Тыттарман, тет, шăпине.
Пĕр сăмахпа каласан,
Йумахри пек йуптарсан,
Пурăннă, тет, йурлăпа,
Йалан çитмен пурнăçпа;
Выçăк-чĕрлĕх ĕрчемен,

Хур-кăвакал хунаман,
Тырă-пулă ăнăçман,
Пÿлĕхçĕсем пиллемен,—
Йалан çитмен пурнăçра
Пураннă, тет, асапра.

Çитмĕл çула çитиччен,
Вăйран-халран ÿкиччен,
Пураннă, тет, мĕскĕнсем
Ачапчасăрах вĕсем.
Шухăшлăр-ха хăнăрах:
Питĕ йăвăр, çăмăл мар
Ватăлăхра вăл вара
Ывăл-хĕрсĕр пуранма.
Анчах çак та пулкалать:
Кĕркуннехи кунсенче
Хăш чух пĕлĕт хушшинчен
Çут хĕвел те пăхкалать..
Кам каланă ватăсен
Кил-йыш хутшăнмĕ тесе?
Пĕр ирпеле ăнсăртран
Карчăк ывăл çуратнă.

Карчăкпала старике
Савăнтарас тенĕнех
Çак кил-йышра, çемйере,
Çулсерен мар, кунсерен
Ывăл ÿснĕ васкаса,

Çирĕп сывлăхлă, таса.
Вăл ывăла хаљ епĕр
Ентри тесе чĕнĕпер.

Сехетпе мар, минутпа,
Йумахри пек сум-шутпа
Ӳсрĕ, çитĕнчĕ Ентри.
Мĕнлерех вăл, пĕлтĕр-и?
Çитĕнчĕ те вăл, курăт:
Телей çуккă халăхра,
Асаппала хĕн-хур çеç
Ашкăнаççĕ пур çĕрте.

Шухăшланă, тавçăрнă
(Лăпкă кăна ир пулнă),
Ватăсене ал парса
Йалне-йышне хăварса,
Ентри кайаť çулпала
Хай телейе шырама.
Пĕр кун утаť, икĕ кун..
Телей тупни çук-ха ун.
Тата утаť малала,—
Унăн телей тупмала.

Утаť, утаť çул тăрăх,
Кун кунларĕ, каç турĕ.
Пиллĕкĕмĕш иркине
Çитрĕ пĕр çул йуппине.
Çул йуппинче чул йупа—

Пĕлтерӳле çырупа.
Çакă çыру-пĕлтерӳ
Акă мĕне пĕлтерет:

„Сылтăмала кайсассăн,
Упа тĕлне пулăн ес;
Сулахайа çул тытсан,
Амăрт-кайăк курăн ес“.
Çул йуппинче чарăнса
Тăчĕ те шухăшласа,
Ентри утрĕ малала
Сулахайри çулпала.

Утать Ентри, шав утать,
Кун кунлать те каç тăвать.
Çĕр выртать те пĕр йалта,
Татах утать малала.
Мĕн пулать те мĕн килет,
Курмалине курам, тет.
Кайсан-кайсан, вăл вара,
Ачамсем, ак мĕн курать:

Аслă вăрман çийĕнче
Хĕвел пăхать пикенсе.
Çутă хĕвел çумĕнче
Пултарулă, хăватлă,
Çирĕп, вăйлă çунатлă
Амăрт-кайăк курăнчĕ.
— Капла ăçта çул йĕрлен?—

Кайӑк ыйтрӗ Ентрирен.
Ентри ӑмӑрт-кайӑка
Ӑнлантарчӗ ҫаплала:

— Телей ҫукҫке халӑха,
Ҫавӑ йачӗ шухӑша.
Ҫав телейе шырама
Тухрӑм епӗ ҫак ҫула.
Пурӑнмашкӑн ун ӑрӑн
Ҫӑмӑл мар, хӑвах куран.
Вӑл телейе тупмала,
Тесе тухрӑм ҫак ҫула.

Ӑмӑрт-кайӑк Ентрийе
Ӑс вӗрентрӗ ак мӗнле:
—Ырӑ ҫыннӑм, йӑнӑшан,
Итле ес ман сӑмаха:
Телей ӳкмест ҫул ҫине,
Ҫакна есӗ пӗл, ӗнен.
Ӑна тытса илмеле,
Тытса илме пӗлмеле.
Ырӑ ҫыннӑм, еп сана
Чукмар парап, ил ӑна.
Вара есӗ унпала
Ҫул тыт киле кайала.
Кайсан-кайсан, сан тӗле
Упа тухӗ ҫул ҫине.
Кунӗ пӗтсе килнӗрен,
Мӗкӗрӗ вӑл, ҫӗмӗрӗ...

Çăмăл пулмĕ кĕрешў.
Анчах вăйна ан шелле,
Çавă сĕмсĕр упана
Çапса ўкер курсанах.
Çур ес унăн хырăмне,
Вара тупăн кирлине.

Ентри ăмăрт-кайăка
Чĕререн тав турĕ те,
Хай чукмара çĕклесе
Утрĕ телей çулĕпе.

Утаť Ентри, шав утаť,
Кун кунлаť те каç тăваť.
Пĕр кун утаť, икĕ кун...
Телей тупни çук-ха ун.
Татах утаť малала,—
Ун упана курмала.
Кайсан-кайсан, çул çине
Упа тухрĕ çĕмĕрсе.

Упа пычĕ ун çинех,
Мĕкĕрчĕ çине-çинех...
Ăмăрт-кайăк хушнă пек,
Ентри вăйне пухрĕ те,
Пысăк йăвăр чукмарпа
Вирлĕн çапрĕ упана.
Упа пуçĕ саланчĕ,
Унăн ĕмри татăлчĕ.

Упа хырăмне çурса,
Кăларчĕ вăл пĕр арча—
Ылттăн арча, пысăк мар,
Йăтма çапах çăмăл мар.
Уçрĕ. Унăн ăшĕнчен
Сиксе тухрĕç—ак тĕнче!—
Виçĕ сурăх, пĕр сысна,
Пĕр кĕрĕкпе пĕр сăхман.

Икĕ вата ир те каç
Ывăлĕшĕн кулянаç.
„Ĕмĕрлĕхех ывăла
Çухатрăмăр пулмала",
Тесе хăйсен ывăлне
Асилеççĕ кулленех.
Ăçтан пĕлччĕр-ха вĕсем
Ачи килсе кĕрессе?

Пĕррехине, ир çинче,
Алăк сасси илтĕнчĕ.
Çакă ĕнтĕ вăл Ентри
Килсе кĕчĕ. Пĕлтĕр-и?
Виçĕ сурăх, пĕр сысна
Килсе кĕчĕ картана.
Амĕш илчĕ сăхманне,
Ашшĕ илчĕ кĕрĕкне.
Пăхат Ентри таврана,—
Йусанат пек самана.
Аслă Атăл хĕрринче,

Сем вăрмансем хушшинче
Хурлăх-асап пĕтет пек,
Йăвăр пурнăç иртет пек.
Анчах чăн-чăн телейех
Тупас килет Ентрийĕн.

Шухăшлана, тавçăрна
(Лăпкă кăна ир пулнă),
Ватăсене ал парса,
Йалне-йышне хăварса,
Ентри кайать çулпала
Каллех телей шырама.
Пĕр кун утать, икĕ кун...
Телей тупас килет ун.
Татах утать малала,—
Таçта телей пулмалах.

Утать Ентри, шав утать,
Кун кĕнлать те каç тăвать.
Çакă телей çулĕпе
Кайсан-кайсан, пĕр ирпе
Каллех хĕвел тĕлĕнче
Пултарулă, хăватлă,
Çирĕп, вăйлă çунатлă
Ăмăрт-кайăк курăнчĕ.

Ентри ăмăрт-кайăка
Сăмах хушрĕ çаплала:
Татах йăлăхтарам-ха,—

Чăн-чăн телей пулмала;
Çав телейе тупмалах,
Тесе тухрăм çак çула.
Кирек йепле пулсан та
Тупасшăнах еп ăна.

Ăмăрт-кайăк Ентрийе
Ăс вĕрентрĕ ак мĕнле:
— Телей ÿкмест çул çине,
Кăна ес хăвах пĕлен.
Ăна тытса илмеле,
Тытса илме пĕлмеле
Ырă çыннăм, еп сана
Чукмар парап, ил ăна.
Ил те, килнĕ çулпала
Килне васка кайала.
Кайсан-кайсан, сан тĕле
Кашкăр тухĕ çул çине.
Шăлне шаккĕ, улĕ вăл,
Сана пăвма тăрĕ вăл.
Йăвăр пулĕ кĕрешÿ
Анчах вăйна ан шелле,
Есĕ çавă кашкăра
Çапса ÿкер, ан хăра.
Çур ес унăн хырăмне,
Вара тупăн кирлине.

Ентри ăмăрт-кайăка
Чĕререн тав турĕ те,

Хай чукмара çĕклесе
Утрĕ телей çулĕпе.
Утать Ентри, шав утать,
Кун кунлать те каç тăвать.
Кайсан-кайсан, çул çине
Кашкăр тухрĕ ўлесе.
Амăрт-кайăк хўшнă пек,
Ентри вăйне пухрĕ те,
Пысăк йăвăр чукмарпа
Вирлĕн çапрĕ кашкăра.
Кашкăр пуçĕ саланчĕ,
Унăн ĕмри татăлчĕ.

Кашкăр хырăмне çурса,
Кăларчĕ вăл пĕр арча—
Ылттăн арча, пысăк мар,
Йăтма çапах çăмăл мар.
Уçрĕ. Унăн ăшĕнчен
Сиксе тухрĕç—ак тĕнче!—
Пĕр лаша та пĕр ĕне,—
Савăнтарчĕç Ентрийе.

Икĕ ватă ир те каç
Ывăлĕшĕн кулянаç.
„Ĕмĕрлĕхех ывăла
Çухатрăмăр пулмала“,
Тесе хăйсен ывăлне
Асилеççĕ кулленех.
Ăçтан пĕлччĕр-ха вĕсем
Ачи килсе кĕрессе?

Пӗррехине, ир ҫинче,
Алӑк сасси илтӗнчӗ.
Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл Ентри
Килсе кӗчӗ. Пӗлтӗр-и?
Пӗр лашапа пӗр ӗне
Илсе килчӗ вӑл килне.

Пахаҫ Ентри таврана, —
Улшӑнайрӗ самана.
Аслӑ Атӑл хӗрринче,
Сӗм вӑрмансем хушшинче
Хурлӑх-асап тӗп пулчӗ,
Йӑвӑр пурнӑҫ путланчӗ.
Ҫитрӗ кӗтнӗ самана,
Лайӑхланчӗ пурӑнма.
Анчах, темшӗн, пӗтӗмпех
Пурте пулсах ҫитмен пек.

Курать Ентри, ӑнланать:
Йурамасть-ха лӑпланма.
Ватӑсене ал парса,
Йалне-йышне хӑварса,
Татах тухать вӑл ҫула
Чӑн-чӑн телей шырама.
Утать Ентри, шав утать,
Кун кунлать те каҫ тӑвать.
Кайсан-кайсан, вӑл татах
Курать ӑмӑрт-кайӑка.

Амăрт-кайăк паттăра
Чукмар пиллет, ăс парать.
Унăн çакă чукмарпа
Тата тилĕ тытмала.
Вăра пĕтĕм телейпе
Пырса кĕрĕ вăл килне.
Ăс парана тав туса,
Ентри утрĕ малала.

Нумай вăхăт иртмерĕ,
Чейе тилĕ тĕл пулчĕ.
Ентри çакă тилле те,
Амăрт-кайăк хушнă пек,
Чукмарĕпе тĕп турĕ.

Ентри çитрĕ те йалне,
Хăйне хăй те ĕненмест:
Ăна таван йалĕнче
Йумахри пек туйăнчĕ.
Аслă урам тăршшипе
Çĕнĕ çуртсем çĕкленнĕ,
Керменсем пек куранса,
Лараç чуна йăпатса.
Каç пулсассăнах йалта
Електрицă çутатать.
Уйра-хирте йăран çук,
Унта ĕçлет хурçă ут.

Пăхаť Ентри йал çине—
Тулли телей çиçĕнет!
Ма тесессĕн—колхозра
Пуранаť вăл савăнса.
Ампарне уçаť Ентри—
Тырă-пулă куç тулли;
Кĕрет Ентри витене—
Самăр утсем кĕçенеç;
Пăхаť Ентри картана—
Выљăх тулли картара.
Унтан кĕрет те пӳртне,
Ĕненмест те курнине:
Ватă амĕш пӳртĕнче
Вулаť ăслă кĕнеке.

Йумах йуман тăрринче,
Хам урхамах çийĕнче.
Йумах йатăм, йуптартăм,
Сире кăштах тыттартăм:
Упа пулнă—патша вăл,
Кашкăр пулнă—улпут вăл,
Тилĕ пулнă—кулак вăл.
Халăх курас ырлăха,
Халăх пухас пурлăха.
Çавсем кӳпсе пураннă.
Ĕçчен халăх телейне,
Ĕçчен халăх тивĕçне
Шав хупласа пураннă.

Пултарулă, хăватлă,
Çирĕп, вăйлă çунатлă
Ăмăрт-кайăк—Ленин вăл,
Амăрт-кайăк—Сталин вăл.
Аслă Ленин ăсĕпе
Чăваш тупрĕ телейне,
Аслă Сталин ăсĕпе
Чăваш тупрĕ тивĕçне.

Аслă Атăл хĕрринче,
Чăвашсенĕн çĕрĕнче
Чечекленчĕ пурăнăç,
Ĕнтĕ пăх та кур ăна!
Телей тупса панăшăн
Çак ик ăмăрт-кайăка
Пĕтĕм халăх тав тăвать.

1937.

# ТУПМАЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Октябӗр юрри | 5 |
| Хӗвелӗмӗр Сталин | 8 |
| Аша салам | 10 |
| Ҫитрӗ, ҫитрӗ кӗтнӗ ӗмӗр | 12 |
| Амӑрту юрри | 14 |
| Ҫӗрчиксен маршӗ | 16 |
| Полюс сӑвви | 18 |
| И пӗлӗт те иртет | 20 |
| Ҫыру | 22 |
| Амӑшӗ | 24 |
| Перекоп | 26 |
| Руставелийӗ асӑнса | 28 |
| Атилӑ Иожӗф тупӑкӗ ҫине | 31 |
| Пирӗн сӑвӑ | 33 |
| Вырмара | 35 |
| Кӳршӗ хӗрӗ | 37 |
| Хурлӑхан хуралнӑ пахчара | 39 |
| Кӳлӗ ҫумӗн, хурӑн айӗн | 40 |
| Телей ҫулӗ (юмах) | 42 |

Хакĕ 2 т. 25 п.
Цена 2 р. 25 к.

ИВАН ИВНИК

# НОВЫЕ СТИХИ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
ЧЕБОКСАРЫ ◆ 1938